Передана по радио
27.V.1955.
ВДотн.

Чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ поэчӗ

Чӑваш литературин классикӗ Константин Васильевич Иванов ҫуралнӑранпа паян, май уйӑхӗн 27-мӗшӗнче, 65 ҫул ҫитрӗ. Ҫак куна палӑртса, чӑваш ӗҫҫыннисем чаплӑ ларусем туса ирттереҫҫӗ, шкулсенче, вулав ҫурчӗсенче, клубсенче Константин Васильевич Ивановӑн пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен тунӑ докладсем итлеҫҫӗ, литература каҫӗсенче пулаҫҫӗ.

Константин Иванов 1890 ҫулта чечеклӗ майӑн 27-мӗшӗнче, Уфа кӗпӗрнинчи Слакпуҫ ятлӑ ялта ҫуралнӑ. Ялти шкултан вӗренсе тухсан, 1903 ҫулта, кӗркунне, ҫамрӑк Кӗҫтентин Чӗмпӗрти чӑваш шкулне пырса кӗрет. Малашне вара унӑн пӗтӗм пурнӑҫӗ, кӗске вӑхӑтлӑха унта-кунта кайса ҫӳренине шутламасан, Чӗмпӗр хулинче иртет.

Константин Иванов Чӗмпӗрти шкулта вӗреннӗ чухне литература ӗҫне хутшӑннӑ. Вӑл 1907-1908 ҫулсенче "Тимӗр тылӑ", "Икӗ хӗр", "Тӑлӑх арӑм" ятлӑ юмахсем ҫырнӑ. "Нарспи" поэмӑна та поэт ҫавӑн чухнех ҫырса пӗтернӗ. Кунсӑр пуҫне вӑл Лермонтов, Кольцов, Огарев, Некрасов, Майков сӑввисене чӑвашла куҫарнӑ. Ивановӑн хӑватлӑ таланчӗ унӑн оригиналлӑ произведенийӗсенче те, вырӑсларан куҫарнӑ поэмӑсемпе сӑвӑсенче те лайӑх курӑнать: унӑн шухӑшӗсем тарӑн та вӑйлӑ, чӗлхи илемлӗ; сӑввисене вуланӑҫемӗн вулас килет, вӗсем шыв пек юхса пыраҫҫӗ, чун-чӗрене савӑнтараҫҫӗ.

Ҫуркунне ҫуралнӑ поэт хӑйӗн чаплӑ поэмине ҫурхи ӳкерчӗксемпе пуҫлать. Эпир ӑна хавасланса вулатпӑр: сарӑ хӗвел ӑшӑтса пӑхать, юр васкаса ирӗлет; пусӑксенче, варсенче ҫӗмӗрӗлсе шыв кӗрлет; тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет; ҫеҫен хир те ешерет; чечексен ырӑ шӑрши сарӑлать...

Ҫак ытарайми илеме сӑнласа панӑ вӑхӑтрах поэт тӗрлӗ чӗрчунсем ҫинчен, этем ҫинчен ҫырать:

Ҫӳлте, пӗлӗт айӗнче,
Тӑрри юрри илтӗнет.
Ҫемҫе курӑк ҫийӗнче
Путек-сурӑх сиккелет.
Хӑй кӗтӗвӗ патӗнче
Ача шӑхличӗ калать,
Хырӑмӗ питӗ выҫнипе
Силпи ялнелле пӑхать.

Ҫапла, эпир ҫуркунне ҫинчен вуласа панӑ ҫӗртех Силпи ялне ҫитсе кӗретпӗр. Кайрантарахпа вара ку ялта пуян Михетер пурӑннине, унӑн сарӑ чечек пек сӑрӑ хӗр ӳснине, ӑна чухӑн ҫын ывӑлӗ Сетнер юратнине пӗлетпӗр. Михетер мулшӑн ҫунса пурӑнать, укҫашӑн вӑл ҫынна тӗп тума та, тӑван хӗрне сутса яма та хатӗр. Сетнерпе Нарспи Михетерсене, Тӑхтамансене хирӗҫ, мул тӗнчине хирӗҫ кӗрешӗве тухаҫҫӗ. Сав кӗрешӳре иккӗшӗ те ҫапӑҫса вилеҫҫӗ.

"Нарспи" поэмӑна К.Иванов вырӑссен пӗррремӗш революцийӗн саманинче ҫырнӑ. Ҫакӑн чухне Российӑри хуласенче/ ялсенче хаяр кӗрешӳ пынӑ. Обществӑри мӗнпур классем хускалса кайнӑ. Шӑпах ҫак ӗнтӗ ҫак революци пирӗн поэта хавхалантарнӑ, вӑй панӑ.

Константин Иванов халӑх телейӗшӗн кӗрешекен, ӗҫпе пурӑнакан ҫынна мухтаса:

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен:
Шывсем ҫинче, ҫӗр ҫинче
Хуҫа пулса вӑл тӑрать, -

тесе ҫырнӑ.

Ҫак шухӑш- нихҫан кивелми шухӑш. Вӑл акӑ мӗн ҫинчен калать: Константин Иванов - поэт-гуманист; вӑл халӑхшӑн, тӑван ҫӗршывшӑн

чун-чĕререн тăрăшса ĕçленĕ; унăн шухăш-кăмăлĕ çутă пулнă, малта пынă. Шăпах ĕнтĕ çакна пула вăл халăх поэчĕн ятне илтнĕ, чи ырă çынсенчен пĕри пулса çĕршыв историне кĕнĕ.

Константин Иванов ĕмĕчĕсем совет саманинче пурнăçа кĕчĕç. Ирĕклĕ совет çынни хăйĕн ирĕклĕ çĕрĕ çинче ĕçлесе пурăнать, коммунизмла общество тăвать. Çак хĕрӳллĕ ĕçре чăваш халăхĕ Константин Васильевич Иванова ăшă сăмахпа асăнса чыслать, ырă ĕçсемшĕн мухтать.

х х х

Халĕ Константин Ивановăн хăшпĕр сăввисене итлĕр.

—о—